


Авăн уйăхĕн 8-11-мĕшĕсенче Нальчик хулинче Х.М.Бербеков ячĕллĕ Кабарда-Балкар патшалăх университетĕнче Еврази университечĕсен профсоюз организацийĕсен ассоциацийĕн /ЕУПОА/ XXVII съезчĕ иртрĕ.

ЕУПОА - профсоюзсен Совет Союзĕ арканнă хыççăн йĕл илнĕ чи пысăк юхăм, вăл 9 çĕр-шыври 70 ытла университета пĕрлештерет. 30 çула яхăн аслă вĕренӳ заведенийĕсен культура çыхăнăвĕсене, туслăхне çирĕплетме пулăшать. Юлашки икĕ çулта ассоциаце 11 пуçламăш профсоюз организацийĕ, çак шутра Украина, Беларуç, Кăркăстан, кĕнĕ.

Университетсен профсоюз организацийĕсем пĕрле ĕçленин тухăçлăхне çак съезд та

аван кӑтартса пачӗ. Унӑн ӗҫне Арменирен, Беларуҫрен, Казахстанран, Мускавран, Питӗртен, Шупашкартан тата Раҫҫейри ытти аслӑ шкултан килнӗ 27 делегат хутшӑнчӗ. Профсоюз лидерӗсен форумне М.В.Ломоносов ячӗллӗ Мускав патшалӑх университечӗн проректорӗ И.Котлобовский уҫрӗ. Унӑн "Вӗрентӳ юхӑмӗн тухӑҫлӑхне ӳстересси: патшалӑх ҫул-йӗрӗ тата ӗҫченсен социаллӑ гарантийӗсем" доклачӗ съезд ӗҫӗн тӗп ҫул-йӗрне палӑртрӗ. Вӗрентӳ тытӑмӗнче реформа ирттернӗ чухне преподавательсемпе студентсене право тӗлӗшӗнчен епле хӳтӗлемелле?

Глобализаци саманинче профсоюз организацийӗсем специалистсем хатӗрлес ӗҫ-хӗлӗн пахалӑхне ӳстерес, университетсене тӗнче шайӗнче ырӑ ят-сум ҫӗнсе илме майсем туса парас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа паян, кашни патшалӑх хӑйне тӗллӗн аталанса пырать пулин те, мӗн пур аслӑ шкул умӗнче пӗр тӗллев тӑрать: конкурентлӑха ӳстересси.

2016 ҫултан аслӑ шкулсен тухӑҫлӑхне ҫеҫ мар, профессура ӗҫӗн тухӑҫлӑхне те хаклама пуҫлаҫҫӗ. Журналсенче пичетленнӗ статьясене, ӑслӑлӑх ӗҫ-хӗлне, студентсен хаклавне шута илӗҫ. Тӗслӗхрен, Мускав патшалӑх университечӗ ҫак ҫӗнӗлӗхе пурнӑҫа кӗртмелли сӑнав лапамӗ пулса та тӑнӑ ӗнтӗ.

И.Н.Ульянов ячӗллӗ ЧПУ представителӗ республикӑри чи пысӑк аслӑ шкул тӗслӗхӗ ҫинче Чӑваш Енре аслӑ пӗлӳ парассин тухӑҫлӑхне ӳстерни ҫинчен каласа кӑтартрӗ.

Съезда хутшӑнакансем университет хулин территорийӗнче Туслӑх аллейи никӗслерӗҫ. Украинӑра граждан вӑрҫи пынӑ вӑхӑтра ҫак пулӑмӑн пӗлтерӗшӗ уйрӑмах пысӑк. Вӑл халӑхсен туслӑхне тата пӗрлӗхне упраса хӑвармалли ҫинчен аса илтерсе тӑрӗ.

**Владимир ВАСИЛЬЕВ**, ЕУПОА ревизи комиссийӗн председателӗ,
И.Н.Ульянов ячӗллӗ ЧПУ профессорӗ.
**Газета "Хыпар". 2014. 23 сентября.**

 